# КАПКӐН




7-МĔШ №

**КУРАК:** Ех-хех хĕй, кӑҫал пур ҫĕртрете кун пек тырпула пухсе илсен, тырӑ ҫисе курайас ҫук та



# Сăлтавсем ТЫСĂК

Шкулсем вађђи вутă к
хурас ĕç пирĕн республ
чăтмала мар вăрахăн пы

Йалсовет председателĕ именчĕклĕн кулкаласа аллисемпе ик йенчен çунатлатса çапса çапла ответ пачĕ мана:

— Аптраса çитрĕм кăçал вутă турттарас ĕçпе. Хĕллене кĕтмеле мар, халех турттарса пĕтермеле,—ăна пĕлетĕп. Анчах манатăп-çке. Ĕçне пуçарса йама манатăп. Килте чухне аса илетĕп, канцеђаринче—пĕтĕмпех манатăп...

— Манасах мар тесессĕн, ирхине канцеђарине кайнă чухне çул тăршшипех санăн шкул вутти çинчен шухăшласа пымала, терĕм епĕ ăна мĕнле те пулсан пулăшас шухăшпа.

— Ан та кала. Ун пек хăтланса та пăхнă. „Пайан вутă пирки халăх пухмала... вутă пирки халăх... вутă пирки... вутă... пухмала... вутă... вутă... пайан вутă... ыран вутă... вутă... халăх вутă... халăх... пайан вутă... пухмала... пухмала та, пухмала... пирки халăх пухмала... вутă, вутă, вутă, вутă, вутă“...

Тăршшипех çапла каласа кайатăп. Манас мар тесе, ниçтала та пăхмастăп урампа пынă чухне. Пĕре çапла каласа пынă хушăрах канцеђаринчен иртнĕ кайнă. Уй хапхи çумне сăмсапа пырса тăрăнсан тин аса илтĕм канцеђари ман такçанах кут хыçĕнче йулнине. Туртана кайала çавăртăм. Халĕ ĕнтĕ пасăрхин пек „вутă, вутă, вутă“ тенĕ сăмахсене каласа пымастăп. Каллех канцеђаринчен иртсе кайса, тепĕр уй хапхи çумне пырса çапăнасран хăратăп. Çапла пынă вăхăтра вутă кӳрес шухăш таçти çăва тĕпнех кайса çухалнă.

— Ну, ай-ай! Пурнасси ун пек пуçпала. Апла санăн мĕн-мĕн тумалине хут татăкĕ çине çырса паллă туса пымала пулнă.

— Унпа та аппаланса пăхнă,—тет хĕрӳленсех калаçма тытăннă председателĕ.—Канцеђаринче, сĕтел çинче манăн календар пур. Икĕ йенеле усăлаканни. Çавăн çине „шкул вађђи вутă кӳмеле“ тесе çырса хутăм та пĕре...

— Ну? Ĕçĕ тухри?

— Тухмарĕ çав. Выходной кунхи листи çине пулнă епĕ çырни. Выходной кун пирки канцеђарийе кайман, çырнине те вулайман. Паллă туса хуни ахалех пĕтнĕ.

— Канцеђарине арăмна илсе каймалаччĕ аса илтерме.

— Арăмпа та аппаланса пăхнă. Йĕп çăрти тăршĕ те усси пулмарĕ. Илсе кайатăн ăна. Вăл йалсовет çекретарне курат̆ те, ирĕлсех кайат̆. Пĕтĕм ĕç çинчен манса кайат̆. Пĕр-пĕрин çине кăвак чăн пек ăшшăн пăхса калаçса лараççĕ. Ах, ку не!.. Пĕрре тытса силлесчĕ!—тетĕп алла к ăшне чиксе вăрттăн чăмăртаса. Çук, пулмаст к ла арăмпа канцеђарийе çӳреме. Ернипе çӳре сĕн арăмсăр та тăрса йулăн. Усси те çук. П пĕрех çекретаре курсассăн арăм хăй мĕн ĕçпе к ни çинчен манса кайат̆. Арăмĕ манăн çавăн й шискер, шанмала марскер пулчĕ.

— „Заруби себе на носу“ тенине илтни? Сăмс картса каймалаччĕ.

— Унпа ĕç тухмаст̆. Пĕре сăмсана картма т алла çĕçĕ тытрăм та, сăмса, çĕçĕ перĕнмесĕр ыратма пуçларĕ. Пăрахрăм вара картас шух

— Аса илмели майсем урăх çуки вара?

— Ма çук? Пур!—терĕ хавасланса председат —Пит аваннийех пур. Арăм ăс пачĕ. Хут тат илетĕн те, ун çине: „манăн пайан шкул ва вутă кӳрес пирки ĕçлемеле“ тесе çырса хура Хутне табак йенчĕкĕ ăшне чиксе çыхатăн. Кан ђаринче ларнă чухне есĕ табак йенчĕкне ка чĕрĕк сехетренех вĕт кăларатăн. Ун чухне в хутне те вуласа пăхатăн, аса илетĕн, терĕ. йурамала ĕнтĕ ку. Килĕшрĕм...

— Вара? Май килчĕ-и?

— Çук çав!—терĕ сассине антарса председат —Ĕç тухмарĕ. Арăм каланă хыççăнах записк çырса табак йенчĕкне чикрĕм. Анчах тепĕр ку зађатийе кайас умĕн, табак туртма пăрахас хăш тытрăм. Пăрахасах тесен йенчĕкне те ки хăвармала. Епĕ те çаплах турăм—йенчĕке ки хăвартăм. Пулмарĕ вара. Вĕçрĕ вутă çинчен илесси...

Председатĕл салхулăн çуталакан куçĕсе именчĕклĕн ман çинеле пăхса илчĕ. Кулнă тунă май сарнă тутисем айĕн пăхакан сарă ш сем „Сойузвинпром“ вывĕски пек курăнса ка

Кун пек ухмах председатĕл çук. Анчах çак вуласа тухнă калава вутă турттарма васк йалсовет председатĕлне вуласа парсан, сăн- çине йăмăх сăн çапассăнах туйăнат̆. Апла пул калавăм ман усăлă.

Иван Мучи

# ИНСТРУКЦИЙЕ

## ПĂХĂНМАН ПУШАР

Ара, ытла ун пекех пулмаст пулĕ те-ха, епĕр ...лах та—пулнă, тейĕпĕр...

Ни инçетре мар, ни çывăхра мар, пĕр йалта йе ...лара, ытах кирлĕ пулсан—савăтра, тейĕпĕр,—...лăх пит куљтурлă, ăнланулă, примерлă пулнă. ...уринчен ытла, кунта пурăнакан çынсем закон...не йуратса хисепленĕ. Тĕпри влаç органĕсем ...лараканнисене кăна мар, вырăнти тĕрлĕ тĕслĕ ...çлăхсем кукăр-макăрăн, çĕлен пек авкалантарса ...ник хӳрелĕн алă пусса кăлараканнисене те пĕтĕм ...нтанах хисепленĕ. Калăпăр, столовăйĕнче „тăвар ...вăтне ан варала, пӳрнӳпе ан чакала" тесе çырса ...нă тăк—çынсем вăл приказа итленĕ, хăшĕсем ...лтенех ывăçпа тăвар çĕклесе пынă, сухал хырнă ...рте „сын ĕçне хисепле" тесе çырнă тăк—парик...махĕрсене ĕçлеме йăвăр ан пултăр тесе сухалĕсе...е кунне иккĕ хыртарнă .. Хушнă рас. Çырса çапнă.

Пĕрре çак çынсем пурăннă çĕрте сасартăк пу...ар тухнă. Вăйлă пушар... Лайăхăнах пĕлме çук: ...е уттиљ склачĕ, те уборнăй çуннă, анчах пушарĕ ...улнă.

Пушара кура, паллах, пĕтĕм халăх ун патне чуп...а пынă. Чупса пынă та... чи хăрушă çĕрте, вут ...ывăхĕнче, пушар каманти иртсе çӳремели, шыв ...мели вырăнта пухăнса пĕтĕм çула картласа, ...кама иртмеле мар туса, ним хусканмасăр тăнă.

Пĕрре тивсе илнĕ çулăм сарăлнăçемĕн сарăлнă, ...рлĕ çурт кĕлпе хăрăм пулса пынă, анчах халăх ...ăн малтанхи пекех тăнă та тăнă... Ним шарламан, ...шара сӳнтерес тесе никам та пӳрнепе те хус...тман, хытнă пекех пулнă. Сайра хутра çеç пĕр...ĕрин çинеле пăхкаласа илсе, хăранă куçĕсене ...ăч-мăч тутаркаланă. Çурт çунса пĕтсен, кĕл ...лсан тин, пушар каманти пырас умĕн, халăх ...аппăн килĕсене саланнă...

...Ара, ун пекех пулман та ĕнтĕ, савнă вулакан...сем, анчах пулма та пултарнă çав.

Ним тыттармасăрах калатăп сире:

— Çĕмĕрлери „Бољшевик" савăтăн директăрĕн заместителĕ Губанов, тата унти пушар каманти ...çлăхĕн заместителĕ Захарăв „Пушартан сыхлан...мали йĕркесем" пичетлесе кăларнă. Ĕнтĕ, урăхла ...аласан—хĕрлĕ автанпа çапăçмали катехизис çыр...а тунă. Пысăк катехизис, 26 пункт. Пушар пу...ас-тăвас пулсан, унта камăн мĕн тума йуранине ...ата мĕн тума йураманнине — пĕтĕмпех, кăкранах ...ăтартса панă.

Акă 20-мĕш пункт:

— „**Рабочие и служащие прибывшие на пожар... не должны собираться вблизи пожара на безопасном месте и в стороне от движения**".

Кунта çапла ăнланмала: пушара пытăн тăк—хăрушă мар çĕрте ан тăр, йепле пулсан та хăрушăрах çĕре кĕрсе кай, çун, суранлан, пĕт. Унтан тата: иртсе çӳремели çĕртен айакра ан тăр, йепле пулсан та çул çинче тăр, çула картла, шыв турттаракансем пулсан—иртме ан пар... Анчах йумах кунпа пĕтмест-ха. 23-мĕш пунктра Губановпа Захарăв ак мĕнле приказ параççĕ:

— „Вмешиваться в распоряжения Начальника (начаљнĕкне мăн саспаллипех çыраççĕ, — поччот вĕт!..—Л. А.) пожарной команды и **давать распоряжения без его ведома к потушению пожара никто не имеет права**"... т. ыт. те.

Ну, йединоначалие хиреç нимĕн те каламăпăр. Лайăх йапала вăл. Пултăр... пушара начаљниксĕр пуçне мĕн пирки никамăн та сӳнтерме йурамаст-ши?

Калăпăр—пушар тухнă. А пушар командин начаљникĕ—çук. Пушара пыман. Таçта çӳрет. Усĕр (пулкалат!..). Арăмĕ кĕтмен çĕртен ача тума тапратнă. Сахал пулат-и пурнăçра ун пекки... Вара пушар патне пыр та—çăварна карса тăр, çапла-и? Начаљник урăличчен, йе унăн арăмĕ ача туса çитериччен кĕтсе тăмала-и? Çапла пуљ...

Пуљ — мар, чăнах. Астăватпăр епĕр ик-виç çул ĕлĕкрех Шупашкарти комун мунчи çуннине. Çавăн пекех пулчĕ: мунча полнăй ход çунат, пожарниксем чухча тăрне хăпарса кайнă, каскисемпе йăлтăртатса тăраççĕ. Анчах сӳнтерекен çук. Насос пырнисем çĕртех пĕтĕрĕнкелесе выртаççĕ.

— Ара, мĕншĕн сӳнтерместĕр?—тесе кăшăраççĕ айалта тăракансем.

— Начаљник килмен-ха, приказ пулман, — теççĕ пожарниксем...

Такки вара пĕр çур сехетре сӳнтерес йапала пĕр-ик сехете карĕ вĕт. Çĕмĕрлере те çавăн пек тăвасшăн ĕнтĕ. Начаљниксем халăха пушарта чи хăрушă вырăнта пухăнма хушаççĕ, анчах пушара хăйсемсĕр сӳнтересрен питех хăраççĕ,—хăйсемсĕр сӳнтерме хушмаççĕ. Хăйсен приказĕ çирĕпрех пултăр тесе йурийех 26-мĕш пункта çырса хунă:

— „Виновные... будут привлекаться к дисциплинарной уголовной ответственности".

Вĕсене хăйсене, çакнашкал пуçпа шухăшламасăр çырса кăларнă „йĕркесемшĕн", халăха ăнлантарас вырăнне ăнран кăларса йанăшăн, кам ответ тыттарĕ-ши?

**Леонид Агакăв.**

---

## Кахалăн чирĕ

**Бригадир:** Çпирка! Ыран тыр вырма каймала. Хатĕрлен.

**Кахал:** Ах, (сасартăк) ах, Ваљă, пулмаст пулĕ, пĕтĕм вар-хырăм ырататçке. Пулмаст пулĕ. Урăх, çăмăлрах ĕç пур пулĕ вĕт мана ваљљи.

**Степ. Степанăв.**

# Тимак маткин авансĕ

Канаш районĕнчи „Хавас" колхозăн 1-мĕш бригадă спискисем çинче ăна Каменева тесе çыраççĕ. Епĕр ăна Тимак матки тейĕпĕр, мĕншĕн тесен вăл Тимакăн саккунлă арăмех пулнă Тимакĕ виличчен. Вăл Мертĕм сăртĕнче, улт çич киллĕ касра пурăнаť. Вăл хăйне тилĕрен те чейерех шутлаť, çавăнпа вăл аванс шучĕпе тырă илмешкĕн правленине татах ыйту пачĕ. Ун ыйтăвĕ çинче вăл вырăпа антăхса вилме хатĕрленнине курма пулаť. Кăна шута илсе правлени ларăвĕ çын пуçне пĕр пăт парасси пирки йышăну çырса хăварчĕ.

Ку йышăнăва тугăр айĕнчи хăлхисем илтсен Тимак матки чĕри хĕпĕртерĕ.

* * *

Хĕвел хĕлхемĕсем Тимак пӳртĕнчи сĕтел çине ӳкрĕç.

Унччен те пулмин пĕр хурарах хĕр чӳрече йанахисене шаккаса:

— Инке, инке! Айта çум çумлама. Тăр. Ес кĕгӳ та хуман вĕт,—терĕ те Мертĕм сăрчĕпе васкавлăн анса çухалчĕ.

Тимак матки ударницă-колхозницăн йулашки сăмаххисене илтнипе вăранса мелке пуçне кантăк кенеле çаварчĕ те:

— Ман пайан çăкăр пĕçермеле-ха, пырасси пулаймасť,—терĕ мухмăрла çăварĕ. Унтан:

— Кам сасси пулчĕ ха вăл?—тесе вырăн çинчен тăрса чӳречерен пырса пăхрĕ, анчах леш курăнмĕшех пулнă вăл тăриччен.

Акă тепĕр 4 сехетрен унăн аванс тыррипе тунă ерех пăрăхĕнчен пĕррĕмĕш тумламĕ сăрхăнса тумларĕ. Хаљ ĕнтĕ четвĕрт пуласса кăнă кĕтмеле. Ерехĕн хăватне хак памашкăн вăл пĕр черкине çăвара йухтарса пăхрĕ.

Час-часах ерехпе хытланнăскер вăл тума та вĕреннĕ, çав вăхăтрах ĕçме те хăнăхнă. Татах ĕçрĕ. Унтан йулташ çук пирки:

— Тимак матки, тав сана!—тесе хăйне хăй тав туса сыпрĕ.

Тепре тултарчĕ те сулахай аллипе сылтăм аллине тыттарса:

— Тав сана, Тимак матки! Ку тĕппи курка, терĕ Хайхискер?

— Каллех мана-и? Капла йăвăр килмĕ-ши?

— Ой мĕн йăвăрри пултăр, шалт тутар, — тесе пĕр тумлам йулмиччен ӳлĕнтерчĕ. — Каменева тав сана!—тесе те пăхрĕ.

Саппун кăсйинчен тĕкĕр татакĕ кăларса йусанкаларĕ те четвĕрт умĕнче йурă пикенчĕ.

Çапла йухтараť вăл авансран ерех тума ăста арăм. Тимак матки татах правленирен аванс ыйтса ыйту çыртараť, тет. Пырĕ типме тапратнă курăнаť. Пырĕ кăтăкланнăран йĕплĕ çăмах хыптарас, тетпĕр ăна. Кăтăкланакан пырне хăйĕн йĕпписемпе хыçса йатăр лайăхрах, тетпĕр епĕр.

**Селмет.**

# „Ан çухат" йатлă йапала

Кĕçĕн Йелчĕк промколхозăн атă-пушмак маçт... скойĕнче йусанă пушмаксем, йусанă хыççăн ... хут тăхăнма та çитмеççĕ, теççĕ. Унга тугарнă пу... мак кĕлли утса пынă çĕртех йе хăйпăнса ӳкет ... пушмакăн пĕр-пĕр чи кирлĕ пайĕ çухалса йула...

Епĕр Кĕçĕн Йелчĕк промколхозăн мастерской... че тунă пушмаксем валљи çĕнĕ прибор шухăшл... кăлартăмăр. „Ан çухат" йатлă вăл. Ăна мĕнле ... нисе ӳкерчĕк тăрăх пĕлме пултаратăр.



Ку вăл пушмака сапаланса кайма памасť. Сапаланса кайнă пушмак пайĕсем та утса пынă ху... рах урараи тухса ӳкеймеççĕ,—пăхсассăн сапаланм... пекех туйăнаççĕ.

Аппрачĕпе усă курма такăм та, пĕчĕк ачас... те пĕлме пултараççĕ.

Аппарат аван. Анчах çав аван аппарата маст... скойĕнче ĕçлекенсене памаспăр. Тем чухлĕ т... хасласан та памаспăр. Тума вĕренччĕр вĕсем х... сене валљи те пулин пахалăх йенчен лайăх а... пушмаксем!

# ТАРĂХНĂ




— Ех-хах-хай! Ĕлкĕреймерĕм вĕт парекетне çитме,—пуçне хыçрĕ мужик.

# ТЕЛЕЙЛӖ МИНУТСЕМ

…омас Едиссон пит те пысӑк ӑслӑ етем пулнӑ. Ну… …й тӗрлӗ тӗлӗнмеле йапаласем шухӑшласа кӑлар… …. Вӑл пире телефон тейекен йапалана парса хӑ… …рнӑ иккенне пурте пӗлеççӗ пулмала.

…Етемлӗх тени çак тӗлӗнмеле п…ха телефонпа …мӑл туличченех усӑ курма хевас иккенни те …илах ӗнтӗ. Çак телефон çӳле асӑннӑ етем лӗхшӗн, …н чухлӗ савӑнçлӑ телейлӗ минутсем кӳнине, …илах, чухласа илме пӗлес пулать.

…Сӑмахран, хаљ епӗр Ташкент хулинче тейӗпӗр …к Ташкентри телеграфӑн тап-таса, ниаçтан сас… …н сӑрхӑнса кӗме пултарайман будкине пӗр хӗр …рса кӗчӗ. Чипер, илемлӗ хӗр. Вӑл çав тери пӑл… …лать… Хайӗн ачаш та çемçе аллипе телефон трубу… …не тытать те, хӑлхи çумне çыпçӑнтарса:

— Мускав! Мускав-и ку?.. Волоття-и? Сывӑ-и… … Ку епӗ. Мӗн? Илтӗнмест тетӗн-и? А-а, ес-ма… илтетӗн. Аван, калаçатӑн. Епӗ те калаçатӑп… …ле-ха Вовкӑ, çиччӗмӗшӗнче кӗт мана скорӑйпа …ратӑп… Мӗн… Йурӗ… Халех! Йурӗ, сывӑ пул …ин. Чуптӑватӑп…

…Сӑмах кӗске. Малтан „туса пыратӑп", кайран …а чуптӑватӑп. Шухӑшлас пулать ӗнтӗ, çак чуп… …ине пӗлтерекен хыпар, Вовкӑпа хӗр хушшин… … 3,000 километр пунӑ пулин те, чиперех çитнӗ …с пулать.

…Хаљ ӗнтӗ Ташкентран урӑх çӗре, хамӑр патри …леграфпа-телефонӑн тискер те салхулӑ пурнӑçӗ …не куçар. Калӑпӑр, епӗр хаљ Ташкентран Мускав… …калçмастпӑр, епӗр калаçас тейекен етем 3000 кило… …рта мар, сывӑхарахра, хамӑртан 300 метр хуш… …нче çеç пурӑнать тейӗпӗр. Ну, калапӑр, сирӗн …-пӗр сывӑхри, хӑвӑртан 300 метр хушши айака… …ра ларакан учрежденипе калаçмала. Ун пек …не вара есӗр, телефон аппарачӗн аврине йарса …пӗр те, вӗçӗмсӗрех, пӗрре сылтӑм, тепре сулахай …усемпе, кашни минут хушшинче 1200 хута йа… …çавӑрма тытӑнаттӑр.

…Çавӑрсан-çавӑрсан вара, есӗр, хайхи телейлӗ ми… … патне çитсе перӗнеттӗр… О, йепле пысӑк телей! …вци сирӗн сассӑра илтрӗ. Калӑр-ха, тархашӑн, …саманг сирӗн пурнӑçӑрта чи телейлӗ минут… …ен пӗри мари-ха? Вӗт тепӗр 20 минута йакӑн …кӑртаттарсанах, сирӗн умма хайхи, есӗр калаçас …ӗ етем пырса та тӑратçке. Тӗрӗс—есӗр йӑнӑш… … тепӗр çирӗм минутран сирӗн умра чӑнахах …елейлӗ минут. Сире хирӗç шӑнкӑртаттараççӗ. …р вара, телефон аппарачӗн трубкине алла иле… …те, пуçлатӑр итлеме.

— Ххррр!.. Бррр!.. мунчала вӗренсем… Хррр!.. …ле пурӑнаттӑр,.. салам калӑр… хррр… Марйе …ровнӑна… хррр… Кам чанкӑртаттарать? Катка… …е çитмест… А… Мӗн… Йыт турташшӗ… хррр… …ӑнахта куç пуçа алчӑртаттаракан йапала. Са… …пӗр самантрах пӗтӗм тӗнчепе, унӑн мӗн пур …савӑнӑçӗсенпе, хуйхисемпе, катка-пичке çит… …лӗхӗсемпе, Марйе Петровнӑсене саламланийӗ… …пе, тата мунчала веренӗсеме сыхӑнтарнӑн …ӑчать. Есӗр пӗр вӑхӑтрах вилме пуçланӑ тем хӑркӑлтатнине, вӗттӗн-вӗттӗн барабан çапнине та… тата пӗр кӗтӳ сысна нӑриклетнине итлеттӗр. Есӗр çине тӑрсах, тата тепӗр хут шӑнкӑртатарттӑр, карланкусем тавӑрӑйса тухиччченех хӑвӑра кирлӗ етеме, Çемен Петровича чӗнеттӗр, йулашкинчен, телефонискӑн ашшӗ-амӗшӗпе телефон трубкине пӑрахса, хайхи Çемен Петрович патне, хӑй патне уттартӑр. Вара есӗр унпа сывӑхран, куçӑн-кӗртетӗнех хирехирӗç тӑрса, илтӗнмеле калаçаттӑр.

Ку обрӑзлӑн каласан, телефонӑн йаланхи, кулленхи ӗçӗ. Хаљ ӗнтӗ пӗр икӗçӗр сӑмах телеграф çинчен. Ку вара, пушшех тӗлӗнмеле йапала. Ку, наукӑ чӗлхипе каласан, сирӗн арӑмна хӑвӑр командировкӑран таврнасси çинчен пӗлтерес килет пулсан есӗр пӗр хуларан тепӗр хулана çеç телеграм йама пултараттӑр, тени пулать, мӗншӗн тесен пустуй тӑкак курасран сыхланас тетӗр пулсан, йалсене телеграм йарса аппалама сӗнмеççӗ.

Астуман та, епӗр командировкӑ çинче çарӑнса тӑнӑччӗ пулас. Есӗр, хӑвӑр командировкӑран тавӑрӑннӑ чухне арӑмусем патне ак çакнашкал майлӑрах телеграм йанӑ тейӗпр: „выехал сегодня швейной машине привод купил целую Надю всех прочих Коля".

Çулран тавӑрӑнса кӑштах канкаласан, есӗр, вӑл телеграма хӑвӑртрах илсе вулама пултараттӑр, Вуласа пӑхнӑ хыççӑн, ку телеграм хӑвӑр арӑму аллине лекме пултарайманшӑн, паллах, нийепле те савӑнмасӑр чӑтса иртерейӗмӗр. Теплерен ун аллине лекнӗ пулсан вара, ну-и, лекеччӗ ку тӗлеграмшӑн, шутламан айак пӗрчи хӑварас çукччӗ. Унччченхи телеграмран: „выехал сегодня на швейной машине водку пил целый неделю все пропил" тесе çырнӑскер пулса тухнӑ. Тӗлӗнмеле!

Çакна ӗнтӗ, тем, пахалӑх теççӗ пулас.

Чӗлхе çине килнӗ мар, пахлӑх çинчен каласа хӑварас килет.

„Горьковский коммуна" хаçат редакцийӗ Горьки хулинчен хайӗн спецкорӗ патне, Йетӗрнене телеграм йанӑ. Горькинчен Йетӗрнене çитме 200 километр. Анчах телеграм вӑрӑм çул-мӗвне тиркесе тӑман, Йетӗрнене 3 сехет те 40 минутрах вӗççе çитнӗ. Кореспондент патне мар çав, Йетӗрне… Йетӗрнери почтӑ уйрӑмӗнчен корреспондент патне çитес пуласан тата 200 метр хушши каймала вӗт. Шуткӑ куратӑр-и мӗн, 200 метр вӑл, 200 çухрӑм çеç мар вӗт, каймалах пур, ахалтен мар ӗнтӗ, çав тери хӑвӑрт килекен телеграм та унта 17 сехет хушши сӗнкнӗ.

Телеграмсене йала ӑсатас пулсан, пиçмоноçӑсем урлӑ ӑсатаççӗ. Хула тӑрӑх салатса çӳрес пулсан вара кӑнтарла иртни 4 сехет çитсен, ку ӗçпе аппалансене чӑрманаççӗ, паллах, ӗнтӗ, 4 сехетре, заљати пӗтсен разносчиксем киле саланаççӗ. Малашне те аплах пулсан вара, пирӗн Йетӗрне урамӗнче темӗн те пӗр курма пултарассинчен сыхланас тесе, паллах, калаçмали те çук. Тӳрех калас пулать,

ак çакнашкал йапалсене пуласса кӗтсех тӑр: Мӗн пур вӑйран хашкаса чупса пыракан гражданинран пӗр-пӗр çул çинче тӗл пулнӑ йулташӗ ак çапла ыйтать.

— Ма каплах васкаса, Кӗркури Павлӑч?

Кӗркуи Павлӑчӑ тата хӑвӑртрах ыткӑнса:

— Телеграфа васкатӑп-ха... У-ууф!.. арӑмран çыру илтӗм, вӑл ман пата васкавлӑ телеграм йани çинчен пӗлтерчӗ çырупа.

Ку ӗнтӗ, пирӗн почтӑ уйрӑмӗ телеграфа пулӑшу парас йенӗпе тунӑ ӗçсенчен пӗри.

Çула майӑн почтӑ çинчен пӗр-ик сӑмах.

Ку почтӑ çурчӗ хула варинчи чи пысӑк урамсенчен пӗринче. Почта кӗрсе пӑхсан мӗн-мӗн курма пултараттӑр-ха, есӗр? Кабинет, кабинет, кабинет. Ӗçпе пырса çӳрекеннисене хӗсӗнсе тӑмалах пӗр пӗчӗк, пӑч тӗттӗм кӑритор... Тата мӗн? Тата пырса çӳрекенсемпе çыхӑну тытса тӑмали икӗ пӗчӗкçеç, шӑн кусӗ йевӗр чӳречесем. Чӳречесем умӗнче вӗçӗмсӗр тӗлӗрекен, анаслакан, пӗр ури çинчен тепӗр ури çине куçа-куça тӑракан халӑх.
Кӗтеççӗ. Сехечӗ-сехечӗпе, кӳнӗ-кунӗпе кӗтеççӗ. Паллах, банка йе таçта çӑва шӑтӑкне кайса тӑраннӑ каççиршӑна. Ана çеç-и! Ана çеç мар çав, телефонис кӑна та. Телефонискин те, ниçтах та кайман. Вӑл хӑйӗн икӗ коммутатӑрӗ умӗнчех—ларать. Анчах ун кӗтсе тӑракансем çине пӑхма вӑхӑт çук. Унӑн телеграмсем, вӗçӗмсӗр телеграмсем. Ӑçтан кам патӗнчен килеççӗ вӗсем? Паллӑ мар.

Йурийех, йатарласах хисепе илсе пӑхӑр-ха, йулташсем. Теорере каççиршӑ тавӑрӑнсан, йе калӑпӑр—? телефонискӑ пушансан, кӗтсе тӑраканнисем мӗн чухлӗ телейлӗ минут пурӑна иртереççӗ-ши?

Çак чул стенасем хыçӗнче, етӗм кӗрсе курма пултарайман пӳлӗмсенче мӗн-мӗн пулса иртет-ши? Ку ыйтува хирӗç кӗскен çеç, нумай сӑмахсӑрах татса калӑпӑр: кунта тӳсме çук безобразиǃ Кунта ӗçлекенсем колхозсене хаçат-журнал, çыру, т[...] грам тӑратас ӗçе йепле туса пынине ак çак[...] нах аван чухласа илме пулать.

Кӑрмӑшри „колхозное знамя" хаçата Прачк[...] райхаçат адрӗслесе йанӑскерне, час-часах Йе[...]нери „Спутник колхозника" хаçат редакцине [...]леçе параççӗ.

Ийулнӗн 18-мӗшӗнче тухнӑ „Колхозник йулт[...] хаçата, РӖК председателӗ Иванов йулташ п[...] адрӗслесе йанӑскерне, ийунӗн 26-мӗшнче, урӑ[...]рах каласан, тепӗр 8 кунтан „Колхозник йулт[...] редакцине леçсе параççӗ (пуштӑран Иванов йул[...] патне 200 метр хушши каймала).

„Спутник колхозника" хаçата пичетлекен т[...]графи ку хаçата çырӑнса илмест пулсан та (п[...] сойуз, ӑçта есӗ) ӑна ку хаçта тӑтӑшах леçе параççӗ.

Почтӑ пуçлӑхӗпе унӑн помошникӗ „Спутник [...]хозника" хаçат редакцине 500 листана йахӑн [...]хут вӑрланӑ (йепле киревсӗр ӗç!) пулсан (тат[...] пӗр хут калатпӑр: редакцине!)... автор шухӑ[...] вулакан çак ӗç çинчен илтсенех:—тур çырла[...]рах! колхозниксен посылкисене мӗн кӑтартаççӗ вӗсем? тесе кӑшкӑрса йама кирлӗ.

Çитет те пулӗ ӗнтӗ. Вӑхӑт вӗçлеме. Çитм[...]не фелйетон вӗсне çитни те автӑршӑн пулсан те[...]лӗ минутçке-ха.

Пурте ӑнлантӑр пулмала, автӑр кунта шӳтл[...]лесе Йетӗрнери пуштӑ çуртне ӗçпе пыракан е[...]сем нумай телейлӗ минутсем курса иртерчӗç, т[...]лерӗ. Вӑл мӗн! А вот Йетӗрнери почтӑра ӗçл[...] комуниссем тасату вомиççийӗ умне тухса тӑ[...] мӗн пулӗ. Паллах, ӗнтӗ, вӗсем нумай йышлӑ [...]лӑх массине кӑмӑл туличченех телейлӗ минут[...]пе савӑнтарӗç. Кун пирки епӗ те, вулакансем иккӗленсе тӑрас çуккине шансах тӑратӑп.

**Алексей Чистӑко[...]**

---

## Ыйтатӑн—ответ илетӗн.

**Колхозник** ыйтать:—Мӗн тӑваççӑ 500 тенкӗ хысна укçине çаратнӑ çынна?

**Ответ**:—Ӑна обчӑ пурлӑхне çаратнӑшӑн сута параççӗ. 500 тенкӗрен ытларах растратӑ тунӑ пулсан, тата вӑл Куславка районӗнчи Услӑх йалӗн кооперативӗнче ӗçленӗ пулсассӑн, ӗçсем урӑхла йенпе кайма пултараççӗ. Сӑмахран, Услӑх йалӗн кооперативӗнче прикашчик пулса пурӑннӑ Сундыров. 500 тенкӗрен ытларах пӗр пин тенкӗ растратӑ тунӑ та çавӑнпа халӗ те пин тенкине те унран шыраса илмен, сут скамйи çине те лартман хӑйне. Пирӗн шухӑшпа унӑн халиччен ларвӑ позицине улӑштармаллах пулать, сут скамйи çине лартмалах пулать.

**Ача** ыйтать: — Пӗл, пирӗн районта мӗн ытларах ӳсет?

**Ответ**: — Район йатне кӑтартман та калама пӗлместпӗр—те йӑваççем, те сӗлӗ-ыраш, те тулӑ, те пӑрçа. Шупашкар районӗнче, райсойуз çиçтеминче, растратӑсем ӳсеççӗ. Растратӑсемпе çарату пӗтӗм оборотӑн 5,8 проц. йышӑнса илнӗ.

**Тойтерексем** ыйтать: — Тухтӑрсем чирлӗ çы[...] çывратмала пулсан хлороформ йатлӑ емел пара[...] Хлороформӗ ал айӗнче пулмасан мӗнпе çывра[...] пулать-ха?

**Ответ**:—Хлороформӑсӑр та çывратма пулать. Шупашкар районӗнчи Тойтерексем ыйӑх [...] меннипе аптравӑ çынсене хӑйсен „Комунисӑм ç[...] колхоз çумӗнче тухакан стенхаçата вулатта[...] çывратма пултараççӗ, мӗншӗн тесен вӗсен с[...] хаçачӗ питӗ кивелсе кайнӑ (кӗркуннеренпе [...] номӗр çеç тухнӑ), материалӗсем, вуланӑ çӗрт[...] çывӑрттарса йараççӗ.

**Пӗри** ыйтать — Епӗ ытла самӑрӑлса кайрӑм. [...]лӑр-ха, (ӑста кайса кӑштах та пулин ырханла[...] пулать?

**Ответ**: — Пӑрачкав районне учителе кай. У[...] учителӗсем март уйӑхранпа шалу илмен (ийул[...] 1-мӗшӗнчи сведенисем тӑрӑх).

# РЕПЕТИЦИ

— Мĕн, епĕр кама сийен тунă пире хирĕç калаç-ха? Кам кушакĕн хÿри çине пуснă? Пирте хамăр-а дисциплинă тени кирлĕ, пĕр-пĕрне шыва тĕксе ма йурамасť. Акă, калăпăр, Павăл, есĕ, епĕр виç-ĕн пĕр-пĕрне хÿтĕлесе питĕ хытă кастарсан ни-ам та пире тиркеймĕ. Анчах çакна астăвас пулаť: тлашши ырлама йурамасť, сайра хутра çитмен-ĕхсене критикленçи пулмала,—хуллен, сăмси тăр-не пăчăртаса, катăк алтăр пек тугине тăр-тăр-ăр чĕтретсе пĕтерчĕ Усăп Иванĕ.

— Вернă! Вăт тĕрĕс тек тĕрĕс! Кай, Йăван Усăп-, есĕ хăвăн аçунтан пулман пулĕ, ытла йĕркесĕр лă. Чăнах çаплах кирлĕ. Çапла калас пулаť: Иулташсем, кам пĕлмест пирĕн йалта çакăн пек римерлă коммуниса: ĕçмест, ывăна пĕлмест...

— ĕçлемест, çимест, урă çÿремест,—кулса йа-ĕ Макар.

— Есĕ ан аташ, Макар, есĕ мĕн, кулăш тетни? Шуткă мар сана вăл. Мĕн есĕ колхозра хăвăн çи-е 120 ĕçкунĕ ытлашши çырнă пек куртăн-и? Есĕ ĕр кунĕнче те...

— Есĕ ман çинчен ан кала. Хуна пĕл, вилнĕ айăк çăмарти. Камччĕ-ха çав Çиркаран налук аçарса ĕçекенни, кама-ха тырă укçине хăйĕн çум-е чиксе велоçипед çине йуплешсе ларни...

— Ан лĕпĕртет, ĕнтĕркенĕ тăмана! Апла йенне айсан пулмарĕ те... Шарлас мар пулаť, виççĕн ĕр тĕвĕ тумала. Малтан комиççи умĕнче мухтан-мала, кайран вара çитменлĕхсене каланă пекки умала. Хăвна ху тытма пĕлни те питĕ кирлĕ. Ко-миççи умĕнче çивчĕн, айапçăр пек, куçа пăшалпа ерсе хăратнă хурчăка пек йалтăртаттарса тăрас улаť. Сайра хутра хыттăн ÿсĕрсе илмеле, кулак-емпе кĕрешсе епĕр пысăк çитĕнÿсем турăмăр, те-елемеле. Йе питĕ ывăннă пек аран уртăнкалаca мала, куççене çуррине хупмала, пуçа лăкалама-а, аран-аран, капан айне хунă пек час-часах сыв-амала, нумай ĕçлесе халран кайрăм, темеле. Ан ив, комиççи нумай ĕçлесе мĕн тери ывăнниччен ĕлĕнсе кайтăр.

— Çук, ĕç шăнăрĕ унтă мар, ăна калама пулаť, пĕр пилĕк-ултă кун хатĕрленсен. Ыйтусем парсан мĕн курас? Санран, калăпăр, ыйтрĕç:

— Мĕншĕн колхозра Пеťук арăмĕнне тырă ултаcа чиксе йултăр. Вăт тебе капут, пĕтрĕ те!

— Ей, çавăншăн аптраттăри? Тÿрех кала: чăнах та ун пек халапсем пур: ĕçет, бÿрократ теççĕ, т.ыт. Вăл сăмахсене клас тăшманĕ, пире вĕсемпе кĕрешнĕшĕн кураймасăр калаť...

— А тата ÿсĕрĕлсе колхоз ăйăрипе чупнине, ла-шасене сийен тунине ыйтсан.

— Ай тупрĕ, суйеççĕ те и вçо. Епĕр кăтартăпăр, хăшне-пĕрне хăраткаламала...

— Пренире вара пĕр-пĕрне мухтамала. „Петĕр Ваçилчă примерлă боļшевик. Ăна хăшĕсем курай-масăр тĕрлĕрен суйа халапсем сараççĕ. Вăл хăйне шеллемесĕр ĕçлет. Анчах... ун пысăк çитменлĕхĕсем пур: вăл ытла нумай ĕçленипе час-часах пуç ырат-нипе аптăраť."

— Ĕçленипе мар, ÿссĕрпе,—тесен пĕри.

— Ун чух вара куçа чарса питĕ хытă пăхмала, штăп вăл хăратăр. Пеťук арăмне, Çимен Петровича, та-та ыт. çавăн пеккисене вĕсем калама пултараççĕ, çавăнпа пуху кун вăрмана йамала вĕсене. Ан тив, вăрман тасатчăр.

— Тĕрĕс! Вăт план! Пуç мар пуђ вăл, госплан пуђ, ытла ăслă плансем тăваť.

Пулчĕ те кусен: пытанчăклăх, ултав, самокри-тикăна пÿлесси, т.ыт. Макарпа Усăп Йăванĕ кунĕн çĕрĕн репетици тунă. Апат çинĕ чух та, шыва кĕ-нĕ чух та: Епĕр чăн-чăн боļшевикла кĕрешсе... пире кураймаççĕ, епĕр... Апат çинĕ чух час-часах сĕтел хушшинчен сиксе тăрса: „Йулташсем, епĕр ĕçсе çÿренĕ тени суйа, колхоз ăйăрĕпе те чупман, Пеťук арăмне те улталаман... тенĕ. Çапла аташнă вĕсем. Пĕрре çапла репетици туса пынă çĕрте Ма-кар шыв арманĕ пĕвине сикнĕ, Усăп Йăванĕ шал-ча карта çине пырса çапăнса сăмса тăррине ку-шак чавнă пек чĕркелесе пĕтернĕ.

---

Комиççи пуху уçрĕ. Шкулта лăках халăх. Хăшĕ-сем ачисене те йатса пынă „Кам шуйтанĕ пухнă ку халăха кун чухлĕ. Мĕн кунта. Акатуй çук вĕт!"—шутларĕ Макар, тарăхнипе ун кĕпи те, йĕм кăшă-лĕ те, уринчи атти те тăвăр пек, кăшăлланă пек туйăнчĕ. Темшĕн йанахсем хытарса лартнă пек хус-калми пулчĕç, пуç тÿпине хĕртнĕ çатмапа пуснă пек пĕçертсе кайрĕ.

— Есĕ, Макар, хăвăн пăруна мĕншĕн пусрăн?

— Е-е... нÿхрепе кайса урине хуçнă, пускилсем те пĕлеççĕ.

— Нÿхрепе мĕнпе тĕксе кĕртсе йатăн?

— Ма мĕнпе? Арăмпа хыçалтан алăпа тĕкрĕмĕр те... Çук...

— Халăх темле вăйлă мотор сасартăк ĕçлеме тапратнă пек ахăрса кулса йачĕ.

— Ĕçкунĕсене мĕншĕн тĕрĕс çырман? Мĕншĕн куммуна пĕр ĕç кунĕ вырăнне II тунă...

— Астумасăр пĕр патак ытлашши лартнă та..

— Мĕншĕн бригадă çум йапăх çумланă?

Усăп Йăванне те çавах ыйтусемпе сапса пĕтер-чĕç. Пăшал пуђђи те ыйтусем пек ыраттармасчĕ пулĕ Йăвана. Хытă ыраттарчĕç... Унăн сăмса шă-тăкĕ те, пыр шăтăкĕ те çĕрĕк çăпатасемпе çапса савăлласа лартнă пек шăрланса питĕрĕнсе ларчĕ. Пĕтĕм, ÿт-тир хушшине пăр чышса тултарнă пек-сивĕнсе кайрĕ, кайран, хыççăнах вĕри мунчара ихĕ ерне тытнă пек шулгра тар тапса тухрĕ.

Усăп Йăванĕн те Макара мухтас кăмăл пĕтрĕ. Вăл та çитменлĕхсене, ултавсене пытарма тăрăш-малине пĕтĕмпех манса кайрĕ. Пĕр пăру çинчен çеç калама аса илчĕ: пăру пуснишĕн калаçмали çук, ман хамăн та вăрманта сулахай хăлхине ырат-тарнă та виличчен пусмала пулчĕ.

Пеťук арăмне улталани, ĕçни, тата ыт. манса йулчĕç.

# Ăнаса пăхаççĕ çеç...

Çĕрпӳ йармăкивчи жуђăкла выђавра колхозниксем телей шыраса укçа нумай йанă.



**— Мĕн выђаса илтĕн?**

**— Ан та калах...**

**— Ма.**

**— Йытă çинĕ ман телейе.**

**— Санăнне çеç мар, манне те йытă çисе кайнă ачам...—çапла калаçрĕç укçисене выђаса йанă хыççăн.**

# Ирăчкă

Шурă çӳçлĕ, шурă куçлă пионеркă Ирăчкă Ону рийĕвă пĕр уйăха йахăн ĕнгĕ пурăнат хăнара Тр петовсем патĕнче.

Ăна хăна йачĕпе лайăх тăрантараççĕ, лайăх п хаççĕ, каç пулсан кил хуçи, Трепетов слесăр та çантанпа тытман гитарине алла илсе „Барыђ тăнкăртаттарат. Ирăчкă çинçе сассипе ун хыçç йурлат. Трепетов арăмĕ вĕсем çине пăхса савăн тăрат. Кăмăллă картин.

Пĕре слесăр савăтран таврăнсан ик алли сĕркелесе, савăнăçлăнах кăшкăрса çапла кала шăнччĕ:

— Ирăчкă, арăм апат çиме!

Сасартăк чăланта икĕ паллаңă сасă калаçса тă илтĕнет. Пĕри тархаслат—унăн арăмĕ, тепри Ирăчкă йĕрет.

Йĕре-йĕрех ответ парат Ирăчкă:

—Йарăр мана киле, Мар Палнă, урăх пурăн кăмăлăм çук! Киле кайас килекен пулса кар Йарăр мана, Мар Палнă! Хамăрăн отрйадра ĕçл меле манăн, отрйадран татах уйрăлса пурнасс килмест.

Арăмĕ Ирăчкăна чунтан тархаслат:

—Ну, Ирăчкă, пепкеçĕм!.. Хăт тепĕр ик ерне т пулин пурăн-ха ĕнтĕ. Ман шуйтанĕ сан умăн пĕтĕмпех урăхла, лайăх çын пулса карĕ вĕт. Т мĕскер „мат-мат" тенисене калама пĕтĕмпех п рахрĕ. Чĕлĕмне те сахалтарах туртакан пулч Ерех ĕçессине те мансах карĕ... Ик ерне, ик ерн май килмесен пĕр ерне те пулин, пурăн-ха ĕнт пирĕн хушăмăрта. Ирăчкă, тетĕп, пионерăчкă, пеп кеçĕм! Ес килнĕренпе пурнăç пĕтĕмпех улшăнчĕ. Ирăчкă!.. савнă хĕрĕм... пионерăчкă!..

Иккĕшĕ те пĕрлех йĕрнĕ.

Трепетов илтмĕш пулса тула тухса кайнă.

## Ĕçленĕ чух

**1-ш хĕрарăм:** Мĕншĕн есĕ ачуна йаçлине памастăн

**2-ш хĕрарăм:** Ай, унта памастăп. Тыр вырнă чу ывăнсан ача ĕмĕртме тесе ача патне кайса канм пултаратăп халĕ. Ачана йаçлине парсан вара хыт ĕçлемеле пулат.

**Ст. Степ.**

---

Халăх татах та кулса йачĕ. Нумай тухса каларĕç, пур йенчен те. Кусем иккĕшĕ те партине улталаса пурăнни курăнчĕ.

Шухăша карĕ Карук мучи те. „Епĕ колхозник, ватлăхра та пулин ырă пурнăç тăватăп. Халĕ мана пăх-ха: ĕне, сурăхсем, сыснасем пур, пӳрт лартрăм. Кам тивлечĕ. Партин, парти йертсе пынипе. Партирен, конешнă, Макар, Уçăп Йăванĕ пеккисенчен тасатмала, вĕсем пире чарса пыраççĕ... А епĕ хатĕрленсен мĕншĕн партире тăма пултараймастăп, ударник, 4 хутчен преми илнĕ!"

— Парăр мана сăмах! Конешнă Макар пеккисене кăлармала. Вăл коммунист-и? Пирĕн парти социалисăм тăвасшăн, вĕсем чараççĕ. Ман парти хăйĕн çемйинче ун пеккисене...

— Ман мар, пирĕн парти те,—кăшкăрчĕ хыçалтан пĕри.

— Манăн вăл. Епĕ ăна чĕререн йурататăп, вăл ман, епĕ те партин пулас тетĕп. Çавăнпа сочувствуйушчине кĕретĕп. Петук, Ваçлей, рекомендаци парăр.

Шкулта халăх хавассăн харăс алă çупса йачĕ.

Çапла пĕтрĕ Макарпа Йăван репетицийĕ. Вĕсем пирĕн çинчен суйрĕç, епĕр хытă кĕрешнĕ,—тесе тухса карĕç. Тĕмшĕн çула тăрăшĕпех пĕр-пĕринпе хытă тавлашса пычĕç.

**Ник. Чурпай.**

# Никам та çук

Йетĕрне районĕ Йĕкĕт колхозĕ çумĕнчи партгруппă хĕрарăмсем хушшинче пачах ĕçлемен




Хĕрарăм: Аттă, аттă, пирĕн хушăра ĕçлеме. Пымасассăн акă çавапа.
Парторг: Ой, çук, пулмасть... Ан та туртăр... Хĕрарăм активисткă кирлĕ. Епĕ хĕрарăм мар.

# Тӗлӗннӗ

Долгопоԓанӑ ри савӑтра прогулсем ӳсе пыраҫ




— Тӗлӗнмелле! Икӗ сехет ытла ӗнтӗ шухӑшласа тӑратӑп, прогулсем мӗнтен ӳсе пынине темӗн чухлӗ шухӑшласан та, шухӑшласа кӑлараймастӑп.

## Ҫукран пулнӑ хуйхӑ.

—Пирӗн ӑмӑрту пӗр вырӑнта тӑмасӑ-ха,—тенӗ Кнопкин цехри производ. комиҫҫинче.—Пӗр уйӑх хушшинчех епӗр виҫӗ цеха хамӑрпа ӑмӑрту тума чӗнтӗмӗр: ремонт цехне—прогулсене чакарас тӗлӗшпе, штамповчнӑйне—простойсене пӗтерес тӗлӗшпе, шыв пӑрки цехне—ӗҫе вӑхӑтра ҫӳрес тӗлӗшпе. Ӗҫтухӑҫне 15 проц. хӑпартрӑмӑр, тавар кӑларассине ӳстертӗмӗр, тата виҫ уйӑх хушшинче ӑмӑрту тӗлӗшпе 18 зеҫедани туса иртертӗмӗр. Пӗтӗмӗшпе илсен, пирӗн ӗҫӗмӗрсем пит аван пыраҫҫӗ.

—Браксене чакарас тӗлӗшпе ӗҫсем мӗнле пыраҫҫӗ?—ыйтнӑ тӗрӗслеме пынӑ ҫын Кнопкинран.

Кнопкин шухӑша кайса ӗнсине хыҫа-хыҫа илнӗ те каланӑ:

—Браксене чакарас тӗлӗшпе ӗҫсем начартарах пыраҫҫӗ, темеле-ха. Анчах унта... айӑпӗ пирӗнте мар. Ернекунчен пирӗн брак пӗр процент та пулман, йӳлашки кунсенче брак ӳснӗ ҫемӗн ӳссе пычӗ.

—Ма апла? Чӗрӗ таварӗ начарри лекнӗ-им вара?

—Унпа мар. Браклама хушнӑ ҫынсем хайсем хушшинче ӑмӑртса ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Браклас ӗҫ ҫине тивӗҫлипех пӑхма тытӑнчӗҫ, мурсем!—терӗ кӑмӑлсӑр пулнине палӑртса.

# Ăсĕ катăк.

Канаш районĕнчи Тăвай йатлă йалăн Тамбăкасси çĕлен пек авкаланса йал вĕçне тухса çухалаŤ.

—Ăçта кайаŤ-ши ку?—шухăшлаççĕ çынсем урампа кĕпер урлă каçса пыракан Катăк Йакура чӳречерен пăхса. Вăл урисене кĕвенте пек саркаласа Ерхип Йакурĕ тĕлне çитрĕ. Йакур Ерхипчă чӳречи уçăлчĕ.

—Давай виçĕ литăрлăх укçа, укçа-тенкĕ тӳлевĕнчен каçаратăп,—тет хайхи Йакур.

Ерхип Йакурĕ малтан памасăр тăчĕ. Анчах ерех шĕн çунса тăракан Катăк тутисене курса Йакур Ерхипчă ыйтнине пачĕ.

—Катăк Йакурне 18-тенкĕ укçа тыттарчĕ.

Кулчĕ Катăк тути. Чĕтресе илчĕ ерех кӳпме вĕреннĕ хырăмĕ. Куç-пуçĕ вутланчĕ. Унăн урисем Ерхип Йакурĕ пӳрчĕ патĕнчен хăпса утрĕç. „Центроспирт" прикашчикĕ Бартышев патне.

Тăвайсем Катăк Йакурĕ кулак урапи çинче ларса пырса, ун йурине йурланине хăшĕсем пĕлеççĕ.

—Сурăх тирĕ витĕнсе йалсовет счетоводне лекрĕ вĕт, мур,—теççĕ ун çинчен сăмах пуçласан.

Ĕлĕкрех вĕсем Ахваниç Йакур кулак тавраш-ĕсемпе вăрă ĕçне те тытăннă.

Ахваниç Йакурĕ, Пракки Петри кулаксем Тăвайсемшĕн тискерех пулнă çав. Катăк Йакурĕ вĕсен йытти пулса тăнă. Кайарахпа вăл та вăрăпах пуйрĕ.

Пракки Петри кулака раскулачиŤ тунă вăхăтра Катăк Йакурĕ мĕнле пулăшнине Катăк тĕпсакайĕнче ларакан пушă ерех кĕленчисемпе, вăрттăн çĕре пытарса хунă кĕмĕл укçасем аван пĕлеççĕ.

—Савăннă вĕт, мурсем, чухăнсем çинче,—теççĕ ĕлĕк тарçăра, асапра пурăннă, халĕ колхозри Адам Михали пек колхозниксем.

Акă вăл урамра Пракки Петри кулака тĕл пулаŤ. Ку ĕç кăçалхи ийуњ уйăхĕнче пулнă.

—Епĕ сана пулăшăп, кала мĕн хушатăн,—тет счетовод Катăк Йакурĕ. Лешĕ, Пракки Петри ĕлĕк тарçисене приказ парса ĕçлеттерме вĕреннĕскер, Катăка:

—Колхоза ан кĕр,—тесе хушу параŤ.

Итлет ăна счетовод. Мана мĕн, тет вăл. Ылттăнкемĕл ытларах паччĕр,—шутлаŤ ун пуçĕ.

Иккĕш те ĕçке пуçăнчĕç. Хĕрелчĕç пичĕсем. Пушанчĕç ерех кĕленчисем. Ташларĕç „чаплăран та чаплă" Йакурпа Петĕр урисем.

Унтан урама тухрĕç. Катăк Йакурне Петĕр кулак, каччă хĕре питĕ йуратса ыталанă пек, ытамланă хăйсен урисем утаççĕ. Инвалитланă вĕсене çпирт.

Пынă май тата та нумай калаçаччĕç пулĕ вĕсем, анчах вĕсене пĕр студент хирĕç пулчĕ. Ăна курсан хăйхисем студентпа йатлаçу пуçларĕç. Лешĕ вĕсенчен пăрăнман пулсан кулакпа „служăшчи" ал чăмăрĕсем,студент ĕнси çинче ташлаччĕç те пулĕ. Ладнă пăрăнчĕ.

Пирĕн те „пăрăнас" пулĕ, вĕсем çинчен калаçма чарăнас пулаŤ, ахалĕн вĕсен чăмăрĕсем пирĕн ĕнсе çинче те ташлама тытăнĕç...

**П. Татмăш.**

# Уйăха курсан...

Хăшпĕр профсойуз членĕсем член укçисене вăхăтра тӳлесе пымаççĕ.



**Арăмĕ:** Ай-ай, ку уйăх питĕ те илемлĕçке.

**Упăшки:** Ăçта? Мĕн илĕмĕ унта. Пăхма та хĕрушă вĕт.

**Арăмĕ:** Мĕншĕн?

**Упăшки:** Пилĕк уйăх ĕнтĕ профсойуз член укçине тӳлемен. Вăт мĕншĕн хĕрушă.

## Ман харпăрлăх.

Канаш р. „Çĕнĕ çул" колхоз председателĕ Исайĕв колхозăн стена хаçат заметкине никамран ыйтмасăр шкапа чиксе хураŤ.

**Куракан:**—Ма хаçат заметкине çĕтсе шкапа чикетĕн?

**Исайĕв:**—Хамăн йапалана ма чикме пултараймастăп?

**Куракан:**—Ăçтан „хăвăн" пулма пултараŤ-ши-ха вăл? Ху çырман вĕт ăна.

**Исайĕв:**—Хам çырман та, хам çинчен çырнă унта.

# Иван Кирилчă туйи

Епĕ туйалă çынсене сахал мар куркаланă. Вĕсем, туйалă çынсем—чаплă çынсем пулаççĕ. Акă илер Архимедах. Вăл йаланах хăйĕн пысăк туйипе хăйăр çинче темĕнле ункăсем чĕркелесе ларат. Çавăнпа та унăн туйи те историне кĕрсе йулнă.

Пушкинăн туйи те чапсăрах мар, вăл (туйа!) йалан Пушкин алинче выљаса, çаврăнкаласа пырат. Утат вара Александр Сергейч екран çинче, хăйĕн тавра поет тĕнчи шавласа тăрат. Йе апла пулсан поет туйи те чапсăрах мар, унăн та историнче пĕр кĕтес пур.

Анчах епĕ çырма пуçланă Иван Кирилчă туйи çинчен чылайĕшĕ пĕлеймеççĕ пулмала. Йе тата тепĕрисем Иван Кирилчăна та палласах кайаймаççĕ пулĕ? Паллаймастăр пулсан паллаштарăп еппин:— Иван Кирилчă, йе хушамачĕпе чапласа каласан—Йанейĕв воблă пек типшем, çинçешке, хура çын. Вăл истори урапи çинчен сиксе анса йулнăскер мар, вăл хаљхи çын, совет работникĕ—Хĕрлĕ Чутай РОНО пуçлăхĕ, тесе хутсем çине шăши хўри пек вĕтĕн-вĕтĕн кукăртса алă пусса лараканскер.

Ман шутăмпа Йанейĕв хут ĕçне чылайах чухласа вĕреннĕ çын курăнат. Ахалрен мар, вăл грексен авалхи философĕ Гераклит каланине вуласа ăнланнă та, пурте шăват, пурте улшăнат,—тесе вăрăмăн сывласа йанă. Вара çак формулăн тĕрĕслĕхне практикăра сăнаса пăхма шут тытнă вăл. Ну, сăнама кĕрсе ларнă вăл сĕтел хушшине. Унта пуçланă черке хыççăн черке пыр тĕпнеле йăвантарма.—

— Та—а,—тесе савăнса кайнă Йанейĕв,—чăнахта пурте шăватçке: ха, йепле вăл çутти пыр тĕпнеле шуса анат ха, тата леш икерчисем, çăмăртисем, чăкăчĕсем... Ех, кунта мĕн пурте диалектикă, метафизикă шăрши çук!

Унтан ўсĕр куçĕсемпе пушанма пуçланă кĕленчесем çине пăхат те:—да, чăнах та пурте улшăнат,—тесе вăрăмăн сывласа йарат.—Пасăр ку кĕленче капла марччĕ, халĕ ав улшăннă (пушаннă!),—тĕлĕнет Йанейĕв. Чылайччен тĕлĕнсе ларат вăл. Вырăнчен те хускалмаст. Унтан пĕтĕм вăйне пухат те:—ай, да Гераклит, ай, да философ!—тесе çухăрса йарат.

Кашлинкe.

Каçалана сулăннă май хĕрлĕ питлĕ хĕвел йăмра турачĕсем тĕлне пулса „хĕвел кулат!“ тенинчен ахăлтатса кулат. Колхозниксем уйран тырă вырса таврăнаканскерсем Йанейĕвран ирте-ирте кайаççĕ. Хĕвел те кантăр ăшĕнчи ĕмĕлке пек чўхенсе утакан Йанейĕвран иртсе ту хыçнелеваскат.

Йанейĕв çаплах утат урам тăрăх. Вăл пĕччен утмаст, унăн йулташĕ—туйа пур. Вăл пĕччен чўхенмест, унпа пĕрле туйа та сулкаланса кайат.

Урам хушшипе Йанейĕва хирĕç ШКМ преподавателĕсем иккĕн анаççĕ.

—Стой!—тет Йанейĕв, ăçта вĕçтермеле! Калаçу хыççăн, калаçу кĕрет. Йанейĕв калаçнă май хăйĕн туйине Суворăв командă панă пек сулса тăрат хай ман пуçлăх!

— Ăк—ăк!—хăсма хăтланат Йанейĕв, пĕр преподавателĕ йенеле сулăнса:—есĕ как обществовед,кала: ма сирĕн шкулти работниксем политĕк йенчен çирĕп мар? Ăк—ăк!..

— Тăхта-ха!—тет лешĕ Йанейĕва,—манăн ыйгу пур.

— Мĕн ыйтăвĕ? Епĕ зав РОНО, есĕ манран кĕçĕн, епĕ пуçлăх, епĕ—авторитет! Мана есĕ ыйту пама пултараймастăн! Ăк—ăк,—тукалат Йанейĕв. Унтан тирĕнсе кайса:—аш... епĕ сан пек-к... мар, ...... мат,—тет туйине сулласа.

— Ай, тур, тур, пĕтерет вĕт ку!—тетĕп епĕ шикленсе,— çаста кайса кĕрес? Анчах ĕç кунпах пĕтмерĕ, ĕç Йанейĕв туйине сĕкленĕ май каллех малала шурĕ. Сĕклерĕ конешнă Йанейĕв туйине.

Унтан:—ку туйа, тет преподавателсене,—ку туйа—дисциплинă, ку туйа—Иван Йакăлчă туйи! Сире çак туйа кирлĕ!?

Йанейĕва епĕ урăх итлемерĕм. Хамăн ăшăмра:—ку çын философи тĕтĕмне те шăршласа пăхнă курăнат, литературă чĕчекне те куркаланă пулас,—терĕм те айакала утрăм.

Тырпул пуçтарас кампани хĕрсе пырат. Йанейĕв та тырпул пуçтарас кампанипе Мăн-Хăмаркана командировка йанăскерĕн ĕçĕ хĕрсе пырат. Йумахри пек!

Йанейĕв шучĕпе Иван Йакăлч туйи кирлĕ (хаљхи вăхăтра!) Анчах унăн (Иван Йакăлч!) туйи—миссионер туйи, шăлăм Йанейĕв! Ăна есĕ хăв та пĕлетĕн.

---

# Уçă лавка

Çапла калаççĕ:

— Пирĕн лавка йаланах хупă тăрат. Виçĕ килона тайакан замокĕ çакăнса тăнине те лавкана пыракансем айакранах кураççĕ те:

— Е..питĕрĕнчĕкиç. Пайан-та выходнойши вара—тесе кайала çаврăнса утаççĕ потребителсем.

Канаш районĕнчи Матшури йалпо пачах урăхла ĕçлет. Йалпо мар йулташсем, йалпо председателĕ Афанаçйĕв йапăх ĕçлет.

Матшу йалповĕ йаланах уçă тăрат. Хупă мар вăл, уçă терĕмĕр епĕр сире.

— Табак пури?

— Çук!

— Сахăр пури?

— Çук!

— Канфеткă пури?

— Çук!

Матшу йалповĕ уçă.

— Уçă,—тетĕн, уççи уçă та, уссии çуккă.

— Афанаçйĕв райпотребсойузран панă таварсене те кайса илме ўркенсе пурăнни ипе йалпо колхозниксене ваљљи тавар илсе килмесĕр тăрса, Матшу çыннисене „çук“ текен таварпа тăрантарнă.

Хăçан Афанаçйĕв Матшу йалповĕнчен тасалĕ-ши? Афанаçйĕв та çук пулĕ, тетпĕр епĕр.

В. Т.

# Пуçлăх камит вăййи выљаť

Ку 1934-мĕш çулăн ийунĕн 21-мĕш кунхине каçхине 10 сехет тĕлĕнче Тури Сурăмра (Канаш р.) пĕр йапала пулса иртнĕ. Çак вара „кĕпер праçникĕ“ пулнă иккен. Йалти халăхшăн паллă пулнă ку праçник.

Виçĕ çул аманчăк выртнă кĕпере аран-аран йусаттарнă хыççăн, йалсовет пуçлăхĕ: Ох, питĕ пысăк çитĕнӳ турăмăр, — тесе савăннă. Вара ун йачĕпе „кĕпер праçникĕ“ туса иртерĕнĕ.

Вĕсем, конешнă, çуттине те, пыр шăтăкне вĕчĕлтеттерекен сарă тĕслĕ сăрине те хатĕрленĕ те Йегорăв патне хунă.

Ох, вара хута кайнă ĕç!

Хайсен пичĕсем пулса йе пиççе çитнĕ пануҗми пек хĕрелсе çуталса ларнă. Совет тапакĕ пĕттĕрсесех мăкăрлантарнă чикаркине. Çуттине, конешнă, ырăм тулачченех тултарнă. Çăварĕсем виççĕшин те таљанкă купăс чĕлхи пек уçăлса хупăннă.

Куçĕсем урлă-пирлĕ куракан пулнă (тен турра йе шуйтана та курнă пирки) пуçĕсем ăраснала шухăшлама пуçланă. Сăмахсем те такама вăрçа пуçланă.

Ăнсăртран çакăнта колхоз председателĕ текен етемĕн кĕмеле пулнă.

— Чорт, тухса кай! — тенĕ кăна йалсовет председателĕ.

„Кĕпер праçникĕн“ хăнисем (кĕпер тăвакансем) тĕлĕнсе çеç тăнă.

„Кĕпер праçникĕнче“ пуçлăх хырăмĕ „мана закускă пар!“ — тесе ыйта пуçланă. Çавăнпа çăвартан сăрапа ерех шăршилĕ какриш тухнă. Унпа пĕрле чĕтренсе сăмах тухнă. Самай çăмарта хатĕрлевĕн уполномоченнăйне йалтине, пухаканнине вăрçса тухнă.

— Ес, Гаврилăв, çăмарташăл илсе килекен пулла мĕншĕн ман ваљљи хăвармастăн. Сбйазатĕлнă 10 килограм ман ваљљи хăвармала. Еп-еп. Еп кам? Давай çакăнта пулă, нечего мана закускă ырăнне суханпала улталама.

Тăрăс! чышнă сĕтеле чукмар пек чышкипе. Сĕтел çинчи витресем, стакансем чăнкăрт! чĕтренсе илĕ хăранипе. Гаврилăв та карт! сиксе ларнă тепĕр çĕреле.

Пулă ыйтнă вĕçĕмсĕр пуçлăх çăварĕ. Харкашу пулнă вара.

Пĕр кĕперне йусаттарнă, анчах йалсоветăн тата виçĕ кĕпер йусаттармала. Вăл кĕперсем ваљљи атĕрленĕ йăвăçсене те шăхăртнă тахăшсем.

Шырăн та тупаймăн, тенĕ пек йалсовет пуçлăхĕ анцељарине ернипе пымасť. Аçта-ши вăл? Никам а пĕлмест, конешнă.

Йалсоветра коллективизаци начар пыраť. Çаăнпа районтан йалсовета çынсем пыраççĕ. Никак упаймаççĕ пуçлăха. Ара, вăл шырăн та тупаймăн улнăске.

Çапла пулин те 28-мĕш ийунĕн каçхине тупнах а. Ун чухне вăл туйра камит вăййи вылаť.

Туй, туй, туй тесе,
Туй, туй, туй тесе,
Вуник йăтта вĕлерсе те
Пĕр парапан турăмăр,
Ахай-айар-аа...

Сасси километр çурăва йанраса кайнă унăн. Хăй хăвăл йупа пек танклаттарса утаť. „Ăнсăртран“ ӳксе те пăхаť.

Камит вăййи курма укçала кĕреççĕ. Ку пуçлăх та камит пулнă, анчах укçа парса куракан çук. Вăл камит пулса укçа тупсан займ укçине йалт тагатпăр, тенĕ пулмала. Анчах апла май килмен. Займ укçисем халĕ те йапăх пухăнса пыраççĕ вăл йалта. Ĕçсем йапăх, пит те йапăх унта.

Çт. Çтепанăвпа Гени-Гељ.

# Ветпунктра




— Сыватса парха ман лашана. Хĕрсех кĕлт турттармала. Вăл чире йерчĕ...

— Мĕн пирки-ши вăл чире йерни?

— Пĕлместĕп. Виçĕмкун кăштах çурăмĕнчен урапа туртипе çапса илтĕм те, çавăн хыççăн чире йерчĕ. Ĕçлейми пулчĕ. Такăшин хайар куççĕ пырса ӳкрĕ пулмала.

# Тутанса пăхман йапала



— Санăн аљљун сĕчĕ тутлăчĕ-и?

— Пĕлместĕп. Епĕ тутанса та пăхман. Ун çинчен пирĕн сĕт-çу ферми заведуйушчинчен ыйтас пулаť.

# Хамăр хушăри ĕç

Кĕçĕн Йелчĕк районĕнчи „Октябĕр“ колхозри кладовщик Лапанчикăв Виктăр тата тырпула йышăнакан комиççи членĕсем 1933 çулхи тырпулран 1000 пăта йахăн пытарса хăварнă.

Çак пытарса хăварнă тырра Лапанчикăв ушкăнĕсем хăйсене мĕнле кирлĕ çавăн пек усă курнă. Ревизи комиççи халĕ 700 пăт шыраса тупнă.

**Демидов художник ӳкерчĕкĕ**



**ЛАПАНЧИКĂВ: Каларăм епĕ сире. Хамăр хушăри ĕçе никама та пĕлтерме йурамаст тесе. А, есĕр çăвара хупмарăр, салма пек чĕлхĕрсене чармарăр. Вăт халĕ, лек ĕнтĕ такатана,--терĕ те Лапанчикăв хырăмне тытса йăвăрăн сывларĕ.**

# Тепре пухăначчен

Шупашкар районĕнчи Тăрăнта пи
нер отрйачĕ нимĕн те ĕçлемест. Ç
талăк хутшинче отрйад сапалан
кайат те, кайран каллех çĕнĕрен
ганизацилеме тивет.

**Вожатый:** Халĕ ĕнтĕ, ачасем, пионер отрйад
организацилерĕмĕр. Отрйад пухнă йатпа тунă ча
лă заседанийĕ хупнă тесе шутлатăп. Çитес çул
чен сывă пулăр!

## Ăçти пиçмоносцă ку?

**Ачасем:** Килĕр-ха, пиçмоносцă, кунта. „Хат
пул“-па, „Капкăн“ çырăнса илесшĕн епĕр. Пи
журналсемсĕр ĕçлеме йăвăр пулат.

**Пиçмоносцă.** Мана журналсемпе йăвăр пул
пурте çырăнсан сумкă пĕр пăт туртакан та пул
кайĕ.

## „Кирек хăçан та хатĕр“ текенскер.

Икĕ пионер килте выљаса лараççĕ. Пĕрремĕ
сасартăк выљама пăрахсах шухăша кайат. Мал
вĕсем хушшинче ак çакăн йышши калаçу пул
не илтрĕмĕр:

—Вањкă, ма ара каллех шухăша кайса выљ
ми пултăн?

—Ĕç çинчен шухăшлатăп-ха, пионерсем х
епĕр çакăнта ларнă вăхăтра, йал тăрăх утиљсы
пухса çӳреççĕ. Суботникĕ лайăхрах ирттĕрччĕ.
майрах пухчĕрччĕ, тесе шухăшласа ларатăп.

# Хуйхăрнипе

Кавалти Вăрмар р. колх оз клубĕнче çăвĕпех хаçат-жу р нал çук.

**Арăмĕ:**—Суккăр! Мĕскер тăкса çиетĕн. Çăварна йарас выранне йанах тăрăх йухтаран.

**Упăшки:**—Хуйхăрнипе çăвар тĕлне те манса кайнă.

**Арăмĕ:**—Ма хуйхăран?

**Упăшки:**—Хуйхăрас килчĕ. Кăçал çулталăкĕпех колхоз клубне çÿрерĕм. Пĕр хаçат татки те тупса вуламарăм. Вăхăта сайа йанишĕн хуйхăратăп-çке.

**Кепир.**

*Чечеклĕ çуркунне, чечеклĕ ир!*
*Çăвар тулли кулаŤ ват кукамай.*
*„Кулма вĕрентĕмĕр ĕнтĕ епир“,—*
*тесе калаŤ хăй кулнă май.*


**Социалисăм тăвакансен çĕнтерÿлĕ савăнăçĕ йĕритаврах кĕрлесе тăнă вăхăтра чăвашсен сатирăпа кулăш**

**ЖУРНАЛĔ**

# КАПКĂН

**кашни кулЂтурлă ĕççыннин килĕнчех пуласшăн.**

**Кашни пуштă уйрăмĕнчех**

**Х А К Ĕ:**
**3 уйăха—75 пус,**
**6 уйăха—1 теннĕ те 50 пус,**
**12 уйăха—3 теннĕ.**

**çырăнса илме пулаŤ.**



Сдано в производство 20-VII—34 г.
Подписано к печати 11-VIII—34 г.
Секретарь и вып. редактор И. ИЛЛАРИОНОВ.

**Ответ. редактор: ГУР. ТИТОВ.**

Ст. ф. б. 200×280. Об'ем 1 п. л. Издательство газ. „Канаш“
Чувашглавлит № 1008. Г. Чебоксары, типография №1 Чувашгиза. Заказ № 927 Тираж 2350 экз.

# Çĕнĕ виçе

Йетĕрнерн заготпунктра кире пуканĕсем çитменнипе тĕрлĕ йапаласем хурса виçеççĕ.



Хресчен: Тăхта-ха, аи çыр. Похотлă пулаť. Çак ачине лартсан шăпах пулаť пулĕ.